# АДАПТИРОВАННАЯ РАБОЧАЯ ПРОГРАММА

**по учебному предмету «Чувашский язык» в 3 классе (предметная область «Родной язык и литературное чтение на родном языке») для обучающихся с ОВЗ (ЗПР)**

## Умĕн калани

Ку ēç программине Чăваш Республикин Куславкка районĕнчи пĕтĕмĕшле пĕлӳ паракан муниципаллă бюджетлă "Кунерти пĕтĕмĕшле пĕлу паракан вăтам шкулăн" вēренӳ планē тата «Тăван чĕлхепе литература вулавĕн тĕслĕх программисем: чăваш шкулĕн 1-4 класĕсем валли. М.К. Волков, Л.П. Сергеев, Т.В. Артемьева, О.И. Печников, А.Р. Кульева.- Шупашкар: Чăваш Республикин вĕрентӳ институчĕн издательство центрĕ, 2013.- тĕпе хурса хатĕрленĕ.

Тăван чĕлхе вĕрентнĕ чух пуçламăш шкулта çакăн пек пысăк та пархатарлă **тĕллевсене** пурнăçламалла:

— вĕренекенсен çынлăх туйамĕсене вăйлатмалла, пурнăçа юратма, ырра шанса тăма тата хайсене те ырă кăмăллă, сăпайлă пулма хăнăхтармалла;

— ачасем таврари пурнăç, этемпе çутç çанталăк çинчен мĕн пĕлнине анлăлатмалла;

— ачасен çыхăнуллă тата сăнарлă шухăшлавĕпе ăсне, асăмлас хевтине аталантармалла;

— вĕрену ĕç-хĕлне лайăхрах хăнăхтарса, унан ăслайĕсене «алла илме» май памалла; вĕренӳ вăхăчĕпе перекетлĕ усă курма, харпар хай тĕллĕн ĕçлессин ансатрах мелĕсене чухлама вĕрентмелле;

— тăрăшуллă та тимлĕ вĕренме, кĕнекепе кăсăкланма хăнахтармалла.

**Программăна пурнăçлама çак вĕренӳ хатĕрĕсемпе усă курнă:**

Артемьева Т. В., Волков М.К.,. Сергеев Л.П. Вĕренӳ пособийĕ. Чăваш букварĕ: 1-мĕш класс валли – Шупашкар: Чăваш кĕнеке издательстви, 2015 çул;

Вĕренӳ пособийĕ. Чăваш чĕлхи. 2 класс валли. Л. П. Сергеев, Т. В. Артемьева, А. Р. Кульева, Шупашкар: Чăваш кĕнеке издательстви: 2016 çул;

Вĕренӳ пособийĕ. Чăваш чĕлхи. 3 класс валли. Л. П. Сергеев, Т. В. Артемьева, А. Р. Кульева, Шупашкар: Чăваш кĕнеке издательстви: 2013 çул;

Вĕренӳ пособийĕ. Чăваш чĕлхи. Виноградов Ю. М., Кульева А. Р. 4 –мĕш класс валли. Шупашкар. Чăваш кĕнеке издательстви, 2014 çул;

## Ачасенчен 3 класран вĕренсе тухнă тĕле кĕтекен результатсем

### 1. ПРЕДМЕТĂН ПУЛАС РЕЗУЛЬТАЧĔСЕМ

***3 класран вĕренсе тухнă тĕле кĕтекен результатсем***

**Харкамлăх результачĕсем:**

- ачасен тăван чĕлхене тĕплĕнрех вĕренес, харкамăн пуплев ĕç-хĕлĕсене аталантарас кăмăлĕ амаланни;
- тантăшĕсен тата харкам пуплевне сăнама, тĕрĕслеме вĕренсе пыни;
-тăван чĕлхе пуянлăхĕпе, илемĕпе киленме пуçлани.

**Предметăн пĕрлĕхлĕ результачĕсем:**

- тĕрлĕ текста тишкерме, турелетме вĕренсе пыни;
- пуплев культурин енĕсене тимлеме хăнăхса пыни;
- культура тата çырура пуплев тата хутшăну этикечĕн нормисене тытса пыма хăнăхса пыни;

- урокра тата тулашĕнче харпăр хăй ĕçне йĕркелеме вĕренсе пыни.

**Предметăн пайрам результачĕсем:**

-сăмахăн тĕп пайĕсем – унăн тымарĕпе аффиксĕсем; пуплев пайĕсем- япала ячĕ, глагол, паллă ячĕ; предложенин тĕп членĕсем тата кĕçĕн членĕсем пулнине пĕлни;

-вĕреннĕ орфограммасĕнчен тăракан 40-45 сăмахлă текста таса, тĕрĕс те илемлĕ çырса илме, итленипе (диктант) çырма, предложенисем вĕçĕнче кирлĕ чарану(пăнчă, ыйту е кăшкăру) палли лартма пултарни;

-сăмахсен сасă тытăмне сăнама; сыпăксене уйăрма, уçă тата хупă сасăсене палăртма, уçă сасă çине пусăм укни-укменнине пĕлме, хупă сасă хытти-çемçине, янăравлă-янăравсăррине туйма, сăмахри сасăпа саспалли хисепне уяма хăнăхса пыни;

-сăмах тытăмне (тымарĕпе аффиксне) курма пултарни;

-пуплев пайĕсене (япала ячĕ, глагол, паллă ячĕ) палăртма, вĕсем мĕнле формăрине (япала ячĕсен хисепне, глаголсен вăхăчĕпе хисепне) чухлани;

-предложенири сăмахсен çыхăнăвне асăрхама, сăмах  майлашăвĕсене уйăрни;

-предложени тытăмне( синтаксисне) ансат тишкерме (вал калуллă, ыйтуллă, кăшкăруллă е кашкăрусăр пулнине палăртма, унăн тĕп тата кĕçĕн членĕсене, вĕсем хушшинчи çыхăнăва ыйту лартса) тупма пĕлни;

-ушкăнпа тунă е хатĕр планпа усă курса 55-65 самахла изложени çырма вĕренсе çитни.

## 2.Предметăн шалашĕ (содержанийĕ)

**Çыхăнуллă пуплев.** Текст. Текста вуласа унăн тĕп шухăшне палăртасси. Текст ячĕ темипе, тĕп шухăшĕпе шайлашса тăни. Текст пайĕсене уйăрасси, вĕсене ят парасси. Вĕрентӳçĕ ертсе пынипе калуллă тата сăнлавлă текст планне тăвасси. План тĕсĕсем: ыйтуллă тата калуллă.

Хатĕр е ушкăнпа тунă планпа усă курса текст тăрăх изложени çырасси.

Илемлĕ текстăн ансат жанрĕсем: калав, юмах, сăвă. Вĕсен тытăмĕн уйрăмлăхĕсем. Текст пайĕсен шалашĕ пĕр-пĕринпе килĕшсе тăни.

Темиçе е пĕр ӳкерчĕк тăрăх тата пурнăçра курни-илтни (вăйăсем, ачасен ĕçĕ-хĕлĕ, çут çанталăка сăнани, тĕрлĕçĕре экскурсие кайни, ялти ватăсене пулăшни) çинчен çыхăнуллă калав йĕркелесси, ун хыççăн сочинени çырасси.

ăх сăмахĕсемпе усă курасси. Телефонпа калаçасси.

Çулĕпе аслăрах çынна чăвашла сумласа чĕнмелли сăмахсем (пичче, аппа, инке, мучи, кинемей).

**Еç хучĕсем.** Класри е шкулти хаçата заметкăсем çырасси. Библиотекăран илсе вуланă кĕнекесен списокне туса пыма пĕлесси.

**Сăмах йышне анлăлатасси**

Тăван-хурăнташа чĕнесси

Тумтир тата атă-пушмакпа çыхăннă сăмахсем

Кил-çурт таврашĕпе çыхăннă сăмахсем

Кил-çуртри япала ячĕсем

Килти кайăк-кĕшĕк ячĕсем

Килти выльăх-чĕрлĕх ячĕсем

Кайăк-кĕшĕк ячĕсем

Пулăсемпе шыври чер чунсен ячĕсем

Апат-çимĕç ячĕсем

Улма-çырла, пахча çимĕç ячĕсем

Йывăç ячĕсем

Тĕрлĕӳсен-тăран ячĕсем

Кăмпа ячĕсем

**Чĕлхене ансат тишкересси. Чĕлхе пĕлĕвĕн терминĕсемпе паллаштарасси. Сăмах тытăмĕ**

**Тымар тата аффикссем.** Сăмах тăвакан тата сăмаха улăштаракан аффикссем. Япалана пĕлтерекен сăмахсем çумне *-çă(-çĕ), -лăх(-лĕх), -у(-ӳ)* аффикссем хушăнса пулнă сăмахсене сăнасси. Пĕр тымартан пулнă сăмахсене асăрхаса ушкăнласси, аса илсе каласси, çырасси *(çыр –*

*çыру - çырулăх, кшш - калав - калавçă*

**Япала ячĕ.** Унăн пĕлтерĕшĕ, ыйтăвĕсем. Пайăр ятсемпе пайăр мар ятсем. Япала ячĕсем пĕрреллĕ тата нумайлă хисепсенче пулни. Вĕсем ытти сăмахсемпе çыхăннă чухне тĕрлĕ аффикс йышăнни, ӳкĕм (падеж) термина асăнмасăр вĕсен ыйтăвĕсемпе аффиксĕсене пăхса тухни.

Камăнлăх аффиксĕсем йышăннă япала ячĕсем гĕп мар падежри пĕрреллĕ хисепри (терминсене асăнмасăр) формисемпе пуплевре усă курасси *(аттеме, аттемпе, аçуна, ашшĕне, ашшĕпе* т.ыт.те)

**Глагол.** Унăн пĕлтерĕшĕ, ыйтăвĕсем. Глагол вăхăчĕсем: хальхи вăхăт, пулас вăхăт, иртнĕ вăхăт.

**Паллă ячĕ.** Унăн пĕлтерĕшĕ, ыйтăвĕсем. Вăл япала ячĕпе тата глаголпа çыхăнни. Япала ячĕпе тата глаголпа çыхăниă паллă ячĕсем вĕçленменни. Пĕрешкел е çывăх пĕлтерĕшлĕ паллă ячĕсем *(илемлĕ, капăр, хитре, чипер).*

**Хисеп ячĕ.** Шут тата йĕрке хисеп ячĕсем.

**Предложени.** Калуллă, ыйтуллă тата хистевлĕ предложенисем. Кăшкăруллă предложени. Предложенин тĕп членĕсем — подлежащипе сказуемăй. Предложенин кĕçĕн членĕсем. Предложенисене кĕçĕн членсемпе анлăлатасси.

**Орфографипе орфоэпи.** Э, *е, ă, ю, я* сас паллисемпе усă курма пĕлесси. Вырăс чĕлхинчен йышăннă сăмахсенче *б, г, д, ж, з, ф, ц, щ* сас паллисене тĕрĕс вулама, çырма пĕлесси.

Сăмах тĕпĕнчи вăрăм хупă сасса икĕ пĕр пек сас палли çырса палăртасси: а) *çăрттан, паттăр, параппан, суккăр, маттур, тăвайкки, тĕттĕм, турилкке;* ă) *пĕрре, иккĕ, виççĕ, пшлĕк, çиччĕ, аллă:* б) *ачашшăн, хуллен, вăрттăи, пысăккăн, симĕссĕн, шуррăн; в) валли, хыççăн.*

Хутăш сăмахри ч умĕнчи [л'], [н'] хупă сасăсен çемçелĕхне ятарласа палăртманни: калча, мунча, пăнчă, вăлча, анчах, хупăлча.

*Ç, ч* сас паллисем хыççăн *ы* е *и* çырасси: а) *çыру, çын, çырма, чылай, чыс, çывăх, çырла;* ă) *çимĕç, чикĕ, читлĕх, çинче.*

Усă е [л] сасăпа пĕтекен сăмах тĕпĕçумне *-лă(-лĕ), -ла(-ле)* аффикссем хушăнса пулнă сăмахсенче икĕ пĕр пек сас палли (лл) çырасси: *а)лаша—лашалла, ĕне — ĕнелле, футбол — футболла, лапта-лапталла, пукане — пуканелле, шашка — шашкăлла;* ă) *сухал — сухаллă.*

Нумайлă хисеп аффиксĕнчи [с] сасса (вăл умĕнхи [ш], [ç] сасăсемпе пĕрпекленнĕ тĕслĕхсем) тĕрĕс палăртасси: *юлташсем, тантăшсем, чăрăшсем, лĕпĕшсем, чĕкеçсем.*

Хальхи вăхăтри пĕрреллĕ хисепри глаголсене тĕрĕс каласси, çырасси: *ташлатăп, вĕренетĕп, ĕçлетĕп, юрлатăп, вĕренетĕн, ĕçлетĕн, ташлатъ, юрлатъ, вĕренет, ĕçлет.*

**Таса та илемлĕçырасси**

Çыру гигиенин хăнăхăвĕсене çирĕплетесси. Пĕр йĕр тăрăх çырма хăнăхтарасси. Кăткăс ĕлкеллĕ сас паллисемпе вĕсен çыхăнăвĕ-сене хăвăртрах, таса та илемлĕçырасси.

**ПУПЛЕВЕ ПУР ЕНЛĔН АТАЛАНТАРНĂ МАЙ ЧĔЛХЕНЕ АНСАТ ТИШКЕРМЕ, ТЕРМИНСЕМПЕУСĂ КУРМА ВĔРЕНТЕССИ**

**Çыхăнуллă пуплев.** Пуплевĕн пурнăçри пĕлтерĕшĕ.

**Текст**. Ăна темăпа çыхăнман предложенисен пуххипе танлаштарасси. Текстра мĕн çинчен каланине (текст темине) палăртасси. Текста темиçе сыпăка (пая) уйăрасси. Пысăках мар текста, унăн пайĕсене ят парасси.

**Ӳкерчĕксемпе ĕçлесси.** Ӳкерчĕксем тăрăх ыйтусене хуравласси, предложенисем тăвасси. Вĕсене çырасси.

**Изложени çинчен ăнлантарасси.** Ыйтусене ушкăнпа хуравланă, йывăр орфограммăсене асăрхаттарнă хыççăн вĕрентуçĕ пулăшнипе 30-45 самахлă текст тăрăх изложени çырасси.

Ачасен пурнăçĕпе çыхăннă темăсемпе (вăйă выляни, вăрмана экскурсие кайни, кама та пулин пулăшни, шкул çинчен) 4-5 предложенирен тăракан пĕчĕк калав тăвасси.

**Пуплев этикечĕ.** Сывлăх сунни. Сывлăх суннă чух усă куракан тараватлăх сăмахĕсемпе сăмах майлашăвĕсем. Паллашу самахĕсемпе предложенисем. Сăпайлăн тав тума пĕлесси. Сывпуллашу сăмахĕсем.

**Ĕç хучĕсем.** Ансат пĕлтерӳ хайласси. Юлташ патне çыру çырасси.

**Сăмах йышне пуянлатасси, унпа усă курма пĕлнине çирĕплетесси**

**Тăван-хурăнташа чĕнесси:** атте, анне, асанне, асатте, кукаçи, кукамай, пичче, аппа, шăллăм, йăмăк, кукка, мăн акка, инке, мучи, кинемей.

**Тумтир, атă-пушмак ячĕсем:** пушмак, атă, çăм ата, алса, алсиш, калуш, çуха, кунча, кĕсье, карттус, майка, нуски, пиншак, тутăр, кĕпе, çанă, саппун, чăлха, çĕлĕк;вăрăм, кĕске, илемлĕ, капăр, хитре, шукăль, ăшă, çăм, пурçăн, сарлака;
хыв, хывса ил, салт, тӳмеле, çĕтĕл, пĕт, кивел, тумлан, тăхăн.

**Кил-çурт таврашĕпе çыхăннă сăмахсем:** мунча, хапха, алăк, картиш, карта, çурт, пӳрт, кĕлет, пусă, çăл, вите, лаç, сарай, çенĕк, пӳрт ум, вутă, кухня, газ, плита, ванна, душ, туалет, кран, сивкĕч (холодильник), шăнткăч (морозильник), пулĕм, пусма, картлашка, чӳрече, кăмака, форточка, сакай, урай, мачча, хăлăп, стена, мăрье, юпа, чăлан;

çӳллĕ, ăшă, хулăн, çӳхе, таса, сарлака;

хуп, хупăн, çурăл, шăл,тасат, çу, ту.

**Кил-çуртри япала ячĕсем:** пичке, витре, чулмек, кашăк, вилка, çăра, çăраççи, чаршав, тĕкĕр, йĕп, карта, хуран, турчка, кравать, кашăк, тӳшек, сĕтел, пукан, шăпăр, михĕ, хутаç, çĕçĕ, утиял, куçлăх, минтер, çытар, çитĕ (çитти), çăпала, сак, çатма, шăрпăк, кантăк, хыçлă пукан, турилкке, чашăк, шкап, щётка, стакан.

**Килти кайăк-кĕшĕк ячĕсем, вĕсемпе çыхăннă ытти пуплев пайне кĕрекен сăмахсем:** хур, кăркка, автан, чăх, кăвакал, кайăк-кĕшĕк, хур-кăвакал;

ырхан, хыткан, начар, мăнтар, самăр;

чиклет, авăт, какала, нартлат.

**Килти выльăх-чĕрлĕх ячĕсем, вĕсемпе çыхйннă ытти пуплев пайне кĕрекен сăмахсем:** така, вакăр, тиха, ăйăр, кĕсре, качака, ут, лаша, ĕне, кушак, кролик, сурăх, сысна, йытă, пăру, анчăк, путек, аçа, ама, выльăх, çăвăр; сĕкекен, çара, мăкла, çăмламас, ăратла, мăйракаллă, пĕтĕ, хĕсĕр;
кӳл (лаша), мĕкĕр, вĕр, сыхла, чăрмала.

**Кайăк-кĕшĕк ячĕсем:** акăш, ăсан, вĕçен кайăк, кайăк хур е хур кайăк, кăвакарчăн, кăсăя, куккук, курак, пăрчăкан, путене, çăхан, çерçи, тăмана, тăри, тăрна, уйăп, улатакка, хурчка, чакак, чана, чĕкеç, чёпĕ, шăнкăрч, шăпчак.

**Пулăсемпе шыври чĕр чунсен ячĕсем, вĕсемпе çыхăнакан ытти пуплев пайĕсем:** йыт пулли, карас, карп, партас, çăрттан, çĕлен пулă, çырма пулли, çтерлĕк, шапа, шапа вăлчи, ыраш пăтри;

пулăçă, вăлта, вăлча, карас кулли, пĕве пулли, тăварла пулă, пулă шӳрпи, вĕтĕ пулă.

**Апат-симĕç ячесем, вĕсемпе çыхăнакан ытти пуплев пайĕсем:** апат, аш, икерчĕ, йăва, какай, канфет, кĕрпе, кĕсел, компот, кукăль, лапша, макарон, манна, мăйăр, мороженăй, пăтă, печени, пĕремĕк, пыл, сахăр, серте, пултăран, сĕт, чăкăт, çăкăр, çăмарта, çăнăх, çу, тăвар, тăпăрчă, турăх, уйран, улма, хăйма, чей, чуста, шаркку, шушкă, яшка;
вир (тулă, хура тул, сĕлĕ) кĕрпи, килти çăкăр, хура çăкăр, шур çăкăр, савра çăкăр, çăкăр чĕлли, сăмси, çăкăр магазинĕ, купăста (сĕт) яшки, мăйăр тĕшши, пан улми, калекле (чăмăрла) çăмарта, çăмарта хăпартни, аш (тăпăрчă) кукли, хуран кукли, çăка (чечек) пылĕ, аш апачĕ, çатма икерчи, тăпăрчă (çĕр улми) икерчи, лапша яшки, какай шӳрпи, кĕрпе яшки, сĕлĕ кĕселĕ, çырла кĕселĕ, шĕвĕ пăтă, улма нимĕрĕ, кĕрпеклĕ (типĕ) печени, катăклă сахăр, сахăр песокĕ, тулă (ыраш, сĕлĕ) çăнăхĕ;
ирхи апат, кăнтăрлахи апат, каçхи апат;
уйран уçла, компот вĕрет, варени пĕсер, пыл юхтар, йӳçĕ калать;
йӳçĕ, çуллă, çусăр, пылак, тăварлă, тăварсăр, тутлă, йӳçек, пыллă, сахăрлă;

çыртăк,  касăк,  татăк,  чĕлĕ;
апатлан,  апатлану.

**Улма-çырла, пахча çимĕç ячĕсем, вĕсемпе çыхăнакан ытти пуплев пайĕсем:** купăста, сухан, çĕр улми, кишĕр, хăяр, помидор, йӳç кăшман, сахăр кашманĕ, выльăх кашманĕ, çарăк, кавăн, ыхра, фасоль;

тутлă, йӳçĕ, хĕрхӳ, пылак, шултра, пысăк, вак, вĕтĕ, çӳллĕ, лутра, чĕрĕ, сĕтеклĕ; шăвар, çумла, çитĕн, пиç, кас, ларт, ак, пух, пуçтар, пулса çит, тăварла, тат, çитĕнтер; мăкăнь, нимĕç парçи, çĕр çырли, хурăн çырли, улмуççи, хăмла, хăмла çырли, хĕвел çаврăнăш, хура çырла, хурлăхан, чие, хĕрлĕ хурлăхан, хура хурлăхан;
кăшман çеçки, йăран, кишĕр сĕткенĕ, купăста калчи, купăста пуçĕ, помидор калчи, помидор сĕткенĕ, çĕр улми аври, çĕр улми купала, ыхра шăлĕ, хăмла пахчи, хăмласа, хăяр калчи, хĕвел çаврăнăш пуçĕ (çăвĕ).

**Йывăç ячĕсем:** ăвăс, йăмра, йĕлме, каврас, палан, пилеш, çăка, çĕмĕрт, çирĕк, çӳçе, тирек, хăва, хурăн, хыр, чăрăш, шăлан, шĕшкĕ, юман;
ăвăслăх, йăмралăх, йĕлме йĕлтĕр, палан çырли, паланлăх, хура пилеш, пилеш çупкăмĕ, çăка пылĕ, çăка чечекĕ, çăкалăх, çĕмĕрт çеçки, çирĕклĕх, çӳçелĕх, тирек мамăкĕ, тиреклĕх, хăва хулли, хурамалăх, хурăн милĕкĕ, хурăн шывĕ, хырлăх, чăрăшлăх, шăлан çырли, шĕшкĕ măйăрĕ, шĕшкĕлĕх, юманлăх, юман йĕкелĕ.

**Тĕрлĕ ӳсен - тăран ячĕсем:** тулă, ыраш, урпа, сĕлĕ, пăрçа, пăри, кукуруза, вир, вĕлтĕрен, пултран, măян, хупах, хăях, пиçен, армути, куршанак, кашкăр ути, утмăл турат, йыт пырши, чăрăш тарри;
йĕкел, хыр (юман) йĕкелĕ, кăчкă, хурăн кăчки, кăчкăллă, папак, чечек папакĕ, папкалан, пучах, сапака, хурлăхан сапаки, сĕткен, хурăн сĕткенĕ, çеçке, роза (сирень) çеçки, çеçкене лар, çеçкелен, çулçă, çулçăллă, çырла, çырла шывĕ, çырла пиçнĕ, турат, хунав турат, туратлă, тымар, йывăç тымарĕ, хулă, хăва хулли, хунав, чие хунавĕ, хунав вăрман, хунав яр, хурлăхан хунавĕ, чечек, чечек йăранĕ, чечек çыххи, чечеке лар.

**Кăмпа ячĕсем:** кăмпа, ăвăс кампи, масла кăмпи, çерем кăмпи, тислĕк кăмпи, уплюнкка, ут туги, хурăн кампи, шăна кăмпи, юман кăмпи, шурă кăмпа, măйра кăмпи;
çимелли кăмпа, наркăмăшлă кăмпа, кăмпаçă, кăмпана çӳре, кăмпа тат, кăмпа яшки.

**Чĕлхене ансат тишкересси, терминсемпе усă курасси**

**Алфавит.** Саспаллисен ячĕсем тата йĕрки. Усă тата хупă сасăсем. Хытă тата çемçе сасăсем.
Пĕр-пĕр саспаллипе пуçланакан сăмахсене словарьте шыраса тупма вĕрентесси.
Самахсене алфавит йĕркипе вырнаçтарма хăнăхтарасси (пуçламăш саспалли тăрăх).

**Япалана пĕлтерекен сăмахсем.** Вĕсене *кам?* тата *мĕн?* ыйтусем тăрăх тупасси.

**Япала ĕçне пĕлтерекен сăмахсем.** Вĕсене *мĕн тăвать? мĕн тăвĕ? мĕн турĕ?* ыйтусем тăрăх тупасси.

**Япалан тата унăн ĕçĕн паллине пĕлтерекен сăмахсем,** вĕсене *мĕнле?* ыйту тăрăх тупасси.

**Сăмахсене вĕсен пĕлтерĕшĕсене кура ушкăнласси.** Хирĕçле пĕлтерĕшлĕ сăмахсем *(хура - шурă, пысăк - пĕчĕк, сарлака - ансăр, пылак - йӳçĕ).* Çывăх пĕлтерĕшлĕ сăмахсем: *васка - хыпалан, кил - пыр, усал - хаяр, аван - лайăх, илемлĕ - хитре, чипер.*

**Лексикăпа тематика ушкăнĕсем:** а) тĕс ячĕсем *(хĕрлĕ, сарă, шурă, хура, хăмăр, кăвак* т.ыт.те; *дурен, тура, хала, ула, сара-хала* (лаша сличен); а) 9ьшна хаклакан самахсем *(чилер, илемлĕ, тирпейлĕ, тăрăшуллă, ĕçчен, кахал, наян, мăнтăр, начар* т.ыт.те).

**Предложени.** Пуплеври предложенисене уйăрасси (маларах вĕреннине çирĕплетесси). Предложении тĕп (подлежащипе сказуемай) тата кĕсĕн членĕсем (ячĕсене асăнмасăр).Тĕрлĕ калăплă (тытăмлă) предложенисем хăнăхтарасси. Вĕсене *(кам? мĕн? камăн? мĕнĕн? кама? мĕне? камра? мĕнре? камран? мĕнрен? кампа? мĕнпе? камсăр? мĕнсĕр? камшăн? мĕншĕн/)* ыйтури сăмахсемпе анлăлатасси.

**Пунктуаци.** Предложени вĕçне пăнча, ыйту тата кăшкăру паллисем лартасси.

**Орфографи.** 1) Хытă уçă сасăллă сыпăк е сăмах вĕçĕнчи [л'], [н'], [т'] сасăсене *л, н, т* саспаллисем хыççăн çемçелĕх палли *(ь)* çырса палăртасси: *выльăх, кукăль, супăнь, мăкăнь, халь, ахаль, мăкăль, шукăль; ларать, вылять, чупать, тăрăшать.*

2) Уйаракан çемçелĕх палли *(ь)* çырасси: *мăрье, кĕсье, тухья, Марье.*

3) Вăрăм хупă сасса икĕ пĕр пек саспаллипе палăртасси:

ăру-тăванлăх сăмахĕсенче: *атте, анне, асатте, шăллăм,аппа,кукка, мăнакка;*

çупталăк вăхăчĕсен ячĕсенче: *çулла, хĕлле, кĕркунне, çуркунне;*

хальхи вăхăтри нумайлă хисеприн 3-мĕш сăпатри глаголсен формисенче: *вулаççĕ, вуламаççĕ, ĕçлеççĕ, ĕçлемеççĕ, выляççĕ, вылямаççĕ.*

4) Сăмаха пĕр йĕркерен тепĕр йĕркене куçарасси: *ма-ши-на, вы-ля, япа-ла, пĕ-лĕт-сем.*

5) Çын ячĕпе хушаматне тата ашшĕ ятне, выльăхсемпе чĕр чунсен уйрăм ячĕсене, хула, ял, урам, юхан шыв ячĕсене пысăк саспаллирен пуçласа çырасси: *Иванова Мария Васильевна, Михайлов Иван Викторович, Мăрмăр, Кампур, Улайкка, Аньяр, Хураçка, Канаш, Шупашкар, Шурча, Çавал, Кĕçĕн Çавал, Атăл, Сĕве.*

6) Вырăс чĕлхинчен йышăннă хăш-пĕр сăмахсене вырăс чĕлхинчи пекех çырасси: *а) Миша, Наташа, Коля, Петя, Таня;*

*а) машина, трактор, комбайн, завод, фабрика, самолёт, ракета;*

*б) парта, учитель, директор;*

*в) колхоз, ферма, сад, дыня, помидор;*

*г) кухня, стакан, щётка.*

## Уроксене кашни темăна валли сехет шутне уйăрса парса планлани

## 3 класс

| № | Урок теми | Сехет шуче |
|---|---|---|
| 1. | Текст. Предложени. Сăмах. | 1 |
| 2. | Сасăсемпе сас паллисем. | 1 |
| 3. | Вăрăм хупă сасăсене икĕ сас паллипе палăртасси. | 1 |
| 4. | Ч сасă умĕнчи л , н , хупă сасăсен çемçелĕхне ятарласа палăртманни. | 1 |
| 5. | Вырăс чĕлхинчен çыру урлă йышăннă сăмахсенче б, г, д, ж, з, ф, ц, щ сас паллисем çырасси. | 1 |
| 6. | Творчество ĕçĕ. Кĕске изложени «Пиччĕшĕпе шăллĕ». | 1 |
| 7. | Тĕрĕслев ĕçĕ.Диктант «Кăмпа çумăрĕ». | 1 |
| 8. | Калуллă предложени. | 1 |
| 9. | Ыйтуллă предложени. | 1 |
| 10. | Хистевлĕ предложени. | 1 |
| 11. | Кăшкăруллă предложени. | 1 |

| | | |
|---|---|---|
| 12. | Предложенин тĕп членĕсемпе кĕçĕн членĕсем. | 1 |
| 13. | Сăмах майлашăвĕ. Предложенири сăмахсен çыхăнăвĕ. | 1 |
| 14. | Ансăр тата анлă предложенисем. | 1 |
| 15. | Тĕрĕслев ĕçĕ.Диктант «Валерик». | 1 |
| 16. | Сăмах тытăмĕ. Тымар тата аффикссем. | 1 |
| 17. | Сăмаха улăштаракан тата тăвакан аффикссем. | 1 |
| 18. | Аффикслă сăмахсене тĕрĕс çырасси. | 1 |
| 19. | Тĕрĕслев ĕçĕ. Диктант. «Кăмпара». | 1 |
| 20. | Творчество ĕçĕ. Сочинени «Вĕçсе килĕр, апатланăр». | 1 |
| 21. | Япала ячĕн пĕлтерĕшĕ тата ыйтăвĕсем. | 1 |
| 22. | Япала ячĕсем хисеп тăрăх улшăнни.Ш, с, ç сасăсемпе пĕтекен япала ячĕсене нумайлă хисепре тĕрĕс çырасси. | 1 |
| 23. | Творчество ĕçĕ. Тĕрĕслев ĕçĕ.Изложени "Алăсем" | 1 |
| 24. | Глагол пĕлтерĕшĕ, ыйтăвĕсем. | 1 |
| 25. | Хирĕçле пĕлтерĕшлĕ глаголсем (антонимсем).Çывăх пĕлтерĕшлĕ глаголсем (синонимсем). | 1 |
| 26. | Творчество ĕçĕ. Сочинени «Çуркунне». | 1 |
| 27. | Глагол улшăнăвĕ.Хальхи вăхăт. | 1 |
| 28. | Иртнĕ вăхăт.Пулас вăхăт. | 1 |
| 29. | Тĕрĕслев ĕçĕ. Пăхса çырни «Пĕчĕк тухтăр» | 1 |
| 30. | Паллă ячĕн пĕлтерĕшĕ, ыйтăвĕсем. Паллă ячĕ улшăнманни. | 1 |
| 31. | Паллă ячĕ япала ячĕпе тата ĕç-хĕлпе çыхăнни. | 1 |
| 32. | Тĕрĕслев диктанчĕ «Арбуз» | 1 |
| 33. | Çывăх пĕлтерĕшлĕ паллă ячĕсем (синонимсем). Хирĕçле пĕлтерĕшлĕ паллă ячĕсем (антонимсем). | 1 |
| 34. | Вĕреннине аса илсе çирĕплетни | 2 |

## В/РЕНЕКЕНСЕНЁЫХ+НУЛЛ+ ПУПЛЕВНЕ,ЁЫРУХ+Н+Х+В/СЕНЕ, Ч/ЛХЕНЕТИШКЕРМЕП/ЛНИНЕХАКЛАССИ

**С=махпакаласахуравланинехакламалливиёесем**

С=махпакаласахуравлаттарнипуёлам=шклассенчиачасенп\л\в\сене, =слай\семпех=н=х=в\сенехакламалличикирл\ мелсенченп\ри.

Хурав=нёакен\сенешутаилмелле: а) в\ренн\ материалатуллинтатат\р\скаласапани; =) материала =нланниншай\; б) й\ркипе, ёых=нулл=нкаласапани, пуплевкультури.
**«5» палл= ёак=нпекчухнелартмалла:** в\ренекеначапрограмм=риматериала =нланса, туллин, т\р\сп\лнинек=тартать, х=йкаланинет\сл\хсемпеёир\плетсепарать; с=махсемпепредложенисенех=йт\лл\нтатат\р\стишкерет, в\рентъё\ с\нн\ текстрахаличченв\ренн\ грамматика
пул=м\сене, с=махсенем\нлеёырмаллине, предложениричар=нупаллисенс=лтавнет\р\с =нлантарать: й\ркипе, ёых=нулл= каласахуравлать, пуплевй=н=ш\семпачахтумастье 1 й=н=шранытлатумастьпулсан.
**«4» палл= ёак=нпекчухнелартмалла:** в\ренекенхурав\ «5» палл=пахакламалливиёесенетив\ётерет, анчахв=лправил=сенеёир\плетмеилн\ т\сл\хсенче 1–2 й=н=шт=вать, в\сенех=ехев\рентъё\ пул=шнипеё=м=лл=нахтърлетет; каласапан= чух 1–2 п\ч\кй=н=шт=ватьпулсан.
**«3» палл= ёак=нпекчухнелартмалла:** в\ренекенматериалап\т\м\шле =нланать, анчахтуллинхуравлаймасть, в\рентъё\ пул=шнипеёеёкаласапамапултарать; текстатишкерн\ чухуйр=мй=н=шсемт=вать, в\сенев\рентъё\ ыйтусемпанипеёеётърлетет; правил=сенехаркамт\лл\нт\сл\хсемпеёир\плетсепараймасть, ку \ёев\рентъё\ хушмаыйтусемпарсанёеёпурн=ёлайрать; ёых=нулл= каласапараймасть, каласапан= чухтемиёей=н=шт=ватьпулсан.
**«2» палл= ёак=нпекчухнелартмалла:** в\ренекенматериалап\т\мпехеун=нчикирл\ пайнеп\лмест, каласапан= тататекстпа \ёлен\ чухнепыс=кй=н=шсемт=вать, в\сенев\рентъё\ пул=шнипететърлетейместпулсан.
**«1» палл= ёак=нпекчухнелартмалла:** в\ренекеначав\ренн\ материалапачахтап\лместпулсан.
В\ренн\ т\пправил=семпетататеориматериал\пеёых=нн= х=н=хтарусенчетун= й=н=шсемуйр=махпыс=кй=н=шсемшутланаёё\. В\сеншутнеправил=сенеӑнланмасăр, чуххăмăн каласа пани, хăйсен тĕслĕхĕсемпе çирĕплетменни, калаçупа çырура усă курма пĕлменни кĕреççĕ.
Паллаштараст\ллевпеёеёпрограмм=нак\ртн\
материалаачам\нлеп\лнинет\р\слесехакламакирл\ мар.
**Ёыру \ё\сене (тасатаилемл\ ёырни, диктант) хакламалливиёесем**
Ачасенп\л\в\сене, =слай\семпех=н=х=в\сенекулленхитатап\т\м\шлет\р\слев \ё\семирттерсехакламалла.
**1 класра**ачасенп\л\в\сене, =слай\семпех=н=х=в\сенех=н=хтарусемпурн=ёлаттарсакуллент\р\слесет=малла.
Букварьтапх=р\нчиёыру \ё\семик\ т\рл\ пулаёё\. П\рисем – в\ренн\ п\ч\ктатапыс=ксаспаллисене, сып=ксене, ансат, к\скепредложенисенеалёыр=внеев\рлесеп=хсаёыраcси. Куёыру \ё\семытларахчухне «Ёырутетрач\пе» \ёлессипеёых=наёё\. Теприсем – пичетлен\ с=махсене, предложенисене, текстсенеалёыр=внекуёарасси. Кунпект\р\слемеллиёыру \ё\сем 1-м\ш–3-м\шч\р\ксенчеп\рер, 4-м\щч\р\креикк\ ирттермелле.
**2 - 4классенче**куллентатап\т\м\шлеирттермеллит\р\слевёыру \ё\семшутнеёырсаилни, т\рл\рендиктант
(в\семпеп\рлехпуплеветишкермеллихушма \ёсемтепулаёё\), изложеник\реёё\.
1–4 классенчесочиненив\рентмеллеёеёёыртараёё\. Ч\лхетишкер\в\пеёых=нн= хушма \ёсемпеп\рлеирттерн\ ёыру \ёнеик\ палл=пахаклаёё\: п\ринпе – ёырсаилниш\н, тепринпе – ч\лхетишкер\в\ш\н.
2 класранпуёласатасатаилемл\ ёырассинх=н=х=в\сенетет\р\слесехт=малла. Хакласкритерисеншутнекаллиграфинёаквиёисемк\реёё\: саспаллисен \лкисенеп=смас=р, уё=мл=н, п\рпеквиёелл\ чал=штарсаёырни, в\сенёъл\ш\ танпулни, й\рсенхул=н=ш\, саспаллисемс=махсемхушшинчихуш=, п\рпекки, яланахп\решкелтатаёител\кл\ х=в=ртл=хпаёырни.

**«5» палл= ёак=нпекчухнелартмалла:** в\ренекеначан \ё\ каллиграфинормисенетив\ётерет, ёырурап\р-ик\ пыс=кахмарёйтменл\хпулмапултарать.
**«4» палл= ёак=нпекчухнелартмалла:** в\ренекеначаёыр=в\ виёесенченп\рнетив\ётермест (п\решкелчал=штарсаёырман, саспаллисем, с=махсемхушшинчеп\рпекл\хёукт.ыт.те), 1–2 пыс=кахмарёйтменл\хпур.
**«3» палл=ёак=нпекчухнелартмалла:** в\ренекенёыр=в\ каллиграфивиёисенчен 1–2-шнетив\ётерейместа (саспаллисенеп\решкелчал=штарманни, х=ш-п\рсаспаллисен \лкиуё=млахмарри, саспаллисенёълл\ш\пехул=н=ш\ п\решкелмаррит.ыт.те), 1–2 пыс=кахмарёйтменл\хпур.
**«2» палл= ёак=нпекчухнелартмалла:** в\ренекеначанёыр=в\ каллиграфивиёисенченчылай=шнетив\ётермест.
**«1» палл= ёак=нпекчухнелартмалла:** в\ренекенёыр=в\ пит\ т=рлавс=р, илемл\ мар, унтатърлетн\, тасамарвыр=нсемнумай.
Пыс=кахмарй=н=шсемшутнеёаксемк\реёё\:
1) х=ш-п\рсаспаллисенет\р\смарёырни;
2) пыс=ктатап\ч\ксаспаллисенеп\рй\рёинчеёырманни;
3) х=ш-п\рсаспаллисенет\р\сёых=нтарманни;
4) й\ртенёълеллееаялаллатухсаёырни;
5) ытлашшишултраев\т\ ёырни;
6) х=ш-п\рт\лтесаспаллисенеп\решкелчал=штарсаёырманни, саспаллисем, с=махсемхушшинчихуш= п\рпекпулманни;
7) х=ш-п\рсаспаллисент=рринчипалл=сене, ёек\лсенеп=ссаёырни.
Ачатун= чылайй=н=шът-пъаталан=в\пеёых=нн= пулсан, яп=храхёырн= \ёе «3» палл=пахакламалла.
Кувиёесемпе2 класратасатаилемл\ ёырмаллиуроксенчепурн=ёлан= \ёсенетата**2–4** классенчеятарласаирттерн\ т\р\слев \ё\сенехаклаёё\. Ч=вашч\лхиурок\сенчетасатаилемл\ ёырмав\ренмеллиминутсенчеирттерн\ п\ч\к \ёсенеятарл= палл=семпехакламаёё\.
**Т\р\слев \ё\сене**в=лекутем=нав\ренн\ майев\ренсеп\терсенирттереёё\. В\сеншуч\ тем=нав\ренесйыв=рл=хранкилет. П\т\м\шлет\р\слев \ё\сенеытларахв\ренъч\р\к\, ёурёул\ в\ё\нчеирттереёё\

## 1I-IV классенче диктанта ҫак виҫесемпе хакламалла:

**«5» паллă ҫакăн пек чухне лартмалла:** ача орфографипе пунктуации йăнăшĕсем пачах туман, орфограммăсене тӳрлетмен, каллиграфии виҫисене пăхăнса (саспаллисен ĕлкисене уҫăмлă, пĕрешкел чалăштарса т.ыт.те) ҫырнă, анчах уйрăм ҫитменлĕхсем (сиктерсе хăварнă саспаллисене кĕртсе лартни, саспалли ĕлкине тӳрлетни т.ыт.те) пур пулсан.

**«4» паллă ҫакăн пек чухне лартмалла:** ҫыру ĕҫĕнче орфографи йăн-шĕсем 2, пунктуации йăнăшĕ 1 ытла маар, е 1 орфографи, 2 пунктуаци йăнăшĕ, ĕҫе тирпейлĕ ҫырнă, анчах темиҫе ҫĕрте каллиграфии виҫисене тивĕҫтермен, пĕрĕпĕр орфограммăна тӳрлетни пур пулсан.

**«3» паллă ҫакăн пек чухне лартмалла:** орфографипе пунктуации йăнăшĕсем 6-ран ытла маар, диктантра (вариантсем) орфографи йăнăшĕсем 3-рен 5-е ҫити, пунктуации йăнăшĕсем 3 таран, е 4 орфографи, 2 пунктуаци, е 5 орфографи, 1 пунктуаци йăнăшĕ, ĕҫе тирпейсĕр, каллиграфи виҫисене пăхăнса ҫырман тата тĕрлĕ орфограммăна тӳрлетни 1-2 пулсан.

«2» **паллă ҫакăн пек чухне лартмалла:** диктантра орфографи йăнăшĕсем 6, пунктуации йăнăшĕ 3-4-ран ытла, ĕҫе тирпейсĕр, каллиграфи виҫисене пăхăнмасăр ҫырнă, 3-5 тӳрлетни пур пулсан.

«1» **паллă ҫакăн пек чухне лартмалла:** ҫыру ĕҫĕнче орфографи йăнăшĕсем 8-тан, пунктуации йăнăшĕсем 5-рен ытла, тӳрлетни чылай пулсан.

## Диктантра ҫаксене йăнăш тесе шутламалла:

а) сӑмаха орфографи правилисене пӑсса ҫырни, саспаллисене сиктерсе хӑварни, саспаллисене е сӑмах сыпӑкӗсене ылмаштарса лартни, пӗр сӑмаха тепӗр сӑмахпа улӑштарни;

ӑ) вӗреннӗ правилӑсене пӗлменнипе чарӑну пали лартман е тӗрӗс мар лартнӑ пулсан.

**Диктантра ҫаксем йӑнӑш шутланмаҫҫӗ:**

а) ку таранччен вӗренмен орфографи тата пунктуации правилисемпе ҫыхӑннӑ йӑнӑшсем (кун пек сӑмахсене класс хӑми ҫине ҫырса кӑтартмалла);

ӑ) предложени вӗҫӗнче пӗр хутчен пӑнчӑ лартмасӑр хӑвартнӑ, тепӗр предложени пуҫламӑшне пысӑк саспаллипе ҫырнӑ пулсан;

б) текст шухӑшне улӑштармасӑр пӗр сӑмах вырӑнне тепӗр сӑмах улӑштарса ҫырнӑ пӗр тӗслӗх кӑна пулсан.

**Ҫаксене пӗр йӑнӑш тесе шутламалла:**

а) тӗрӗс мар ҫырнӑ сӑмах икӗ е темиҫе хутчен тӗл пулсан, ҫав правилӑпа ҫыхӑннӑ йӑнӑша тепӗр сӑмахра та тунӑ пулсан, вӗсене пӗр йӑнӑш тесе шутламалла;

ӑ) пысӑках маар 2 ҫитменлӗхе (кӑлтӑка) пӗр йӑнӑш тесе шутламалла.

**Ҫаксене пысӑках маар ҫитменлӗхсем (кӑлтӑксем) шутланаҫҫӗ:**

а) сӑмахра пӗр саспаллинех асӑрхамасӑр икӗ хут ҫырни (*паяян, ыраан* т.ыт.те);

ӑ) сӑмаха ҫырса пӗтерейменни (*кӑранта…, кӗнек…* т.ыт.те);

б) пӗр йӗркерен тепӗр йӗркене куҫарнӑ чухне сӑмахӑн пӗр пайне асӑрхамасӑр пӑрахса хӑварни (*кӗ(не)-ке, те(ле)-фон* т.ыт.те);

в) предложенире пӗр сӑмахах икӗ хут ҫырни.

**Пуплев тишкерӗвне хакламалли виҫесем**

Чӗлхе тишкерӗвӗ евӗрлӗ тӗрӗслев ӗҫӗсене хакланӑ чухне ҫак виҫесемпе усӑ курмалла:

**«5» паллӑ** ача ӗҫӗ пӗр йӑнӑшсӑр пулсан, вӑл терминсемпе правилӑсене лайӑх пӗлни тата хӑй пӗлӗвӗпе тӗрлӗ йышши ӗҫсем тунӑ чухне усӑ курма пултарни палӑрсан лартмалла.

**«4» паллӑ** ача терминсемпе правилӑсене лайӑх пӗлсен, вӗсемпе грамматика тишкерӗвӗ тунӑ чухне пӗлсе усӑ курсан, сӑмахсемпе предложенисене тишкерес ӗҫӗн ¾ пайне тусан лартмалла.

**«3» паллӑ** ача вӗреннӗ материала ӑнланни палӑрсан, хӑй пӗлнипе усӑ курса тишкерӗвӗн ҫуррине пурнӑҫласан лартмалла.

**«2» паллӑ** ача вӗреннӗ материала начар пӗлсен, вӑл «3» паллӑ илмелӗх хуравламасан е пуплев тишкерӗвӗн ытларахӑш пайне пурнӑҫлаймасан лартмалла.

**«1» паллӑ** ача пуплев тишкерӗвне пачах пурнӑҫламасан лартмалла.

**Пӗтӗмӗшле илсен, изложенипе сочинение II-IVклассенче ҫапла хакламалла:**

**«5» паллӑ** шухӑшсемпе (содержанипе) пуплеве ҫакӑн пек йӗркеленӗшӗн лартмалла: автор текстне тӗрӗс тата ҫыхӑнуллӑ ҫырса кӑтартнӑ (изложени), шухӑш темӑпа килӗшӳллӗн, ҫыхӑнуллӑн аталанса пырать, факт йӑнӑшӗсем ҫук, сӑмах йышӗ пуян, пуплев тӗлӗшӗнчен текста тӗрӗс те палӑртуллӑ хайланӑ пулсан.

<u>Тӗрӗс ҫырнӑшӑн</u>: орфографипе пунктуации йӑнӑшӗсем ҫук, 1-2 тӳрлетни пулма пултарать.

**«4» паллӑ** шухӑшсемпе (содержанипе) пуплеве ҫакӑн пек йӗркеленӗшӗн лартмалла: автор текста ҫителӗклӗ таран туллин ҫырса кӑтартман (изложени), темӑна уҫса панӑ, анчах уйрӑм вырӑнсенче шухӑш ҫыхӑнӑвӗ татӑлса кайни, тӗрӗсех маар ҫырни тата пуплев ҫитменлӗхӗсем пур. Пуплев тӗлӗшӗнчен пӗтӗмпе 3 йӑнӑшран ытла маар, содержанипе тунӑ йӑнӑшсем 3 таран тунӑ пулсан.

Тĕрĕс çырнăшăн: 2 орфографи, 1 пунктуаци йăнăшĕнчен ытла маар е 1 орфографи, 2 пунктуаци йăнăшĕ тунă, пĕр-пĕр орфограммăна тӳрлетни пур пулсан. (Вĕреннĕ правилăсемпе тунă йăнăшсене çеç шутламалла).

**«3» паллă** шухăшсемпе (содержанипе) пуплеве çакăн пек йĕркеленĕшĕн: автор текстĕнчен кăштах пăрăннă (изложени), темăпа килĕшӳллĕ тата çыхăнуллă çырман, 2-3 предложение тĕрĕсех йĕркелеймен, сăмах йышĕ чухăн, пуплев тĕлĕшĕнчен çитменлĕхсем пур, шухăш аталанăвĕнче (содержантре), текста йĕркелессинче тата пуплевре йăнăшсем пĕтĕмпе 5 таран пулсан.

Тĕрĕс çырнăшăн: 3-5 орфографи йăнăшĕ таран, вариантсем: 3 орфографи, 2-3 пунктуаци йăнăшĕ, е 4 орфографи, 2 пунктуаци, е 5 орфорграфи, 1 пунктуации йăнăшĕ тунă, тĕрлĕ орфограммăсене тӳрлетни 1-2 пулсан.

**«2» паллă** шухăшсемпе (содержанипе) пуплеве çакăн пек йĕркеленĕшĕн: ĕçе тема тăрăх çырман, автор текстĕнчен чылай пăрăнса кайнă (изложени), текста тĕрĕсех маар ăнланнă вырăнсем (факт йăнăшĕсем) пур, йĕркеллĕ, çыхăнуллă çырман, уйрăм пайсем хушшинче çыхăнулăх çук, сăмах йышĕ чухăн. Текста тата пуплеве йĕркелес енĕпе 6 çитменлĕхпе йăнăшсем пур пулсан.

Тĕрĕс çырнăшăн: орфографи йăнăшĕсем 3-4-ран ытла, 3-5 тӳрлетни пур пулсан.

**«1» паллă** содержанипе пуплеве йĕркеленĕшĕн: автор текстне пачах çырса кăтартман (изложени), пуплеве тата текста йĕркелес тĕлĕшпе 7 йăнăшран ытларах тунă.

Тĕрĕс çырнăшăн: 8 орфографи, 5 пунктуаци йăнăшĕсенчен ытла, 7 çĕрте тӳрлетни пур.

Изложенисемпе сочиненисенче хăш йăнăшсем çитменлĕх (кăлтăк) шутланнине, пĕр йăнăш пулнине т.ыт.те диктанта хакланă чухнехи виçесене шута илсе хакламалла.

**Асăрхаттарни:** пултарулăх ĕçĕсене хакланă чухне таса та илемлĕ çырнине, калиграфи виçисене еплерех пăхăннине (диктанта пахаланă чухнехи пекех) шута илсе хакламалла.

# Хушса пани

## 3 класс

**1-мĕш приложени Изложени.**

**Шанчăклă туссем.**

Кенеке вулама пелекен сын телейле. Унан шанчакла туссем нумай. Ку туссем – кенекесем.

Кенекесемпе эпир перремеш класра паллашатпар. Весем пире емер таршшепех верентсе пырассе. Кенеке вуласа тем синчен те пелме пулать.

Анчах терес вулама пелмелле. Кашни самаха аса хывса вулани усалла. Вулана чухне пер страницана та, пер йеркене те сиктерсе хавармалла мар.

Вулар. Нумай вулакан сын асла.

**Анлантармалли тата асархаттармалли самахсем:** шанчакла туссем, емер таршшепех, аса хывса вулани.

**План вариансесем.**

**1**

1. Шанчакла туссем.
2. Кенекере мен вуласа пелме пулать?
3. Кенекене менле вуламалла?
4. Нумай вулакан сын менлерех?

**2**

1. Кенекесем – пирен туссем.
2. Кенекесемпе паллашни.
3. Терес вулав йерки.

**2-мĕш приложени Изложени.**

**Кавакал чĕпписем.**

Пĕр хĕрарам кавакал ĕрчетме шутланă. Вал кавакал самартисене чах айне хуна. Чах кавакал чĕпписене пусса каларна.

Пĕррехинче чах кавакал чĕпписемпе шыв хĕррине анна. Кавакал чĕпписем турех шыва керсе кайна. Чах дыран хĕррине тарса юлна. Вал чупкалана, катиклетнĕ, кавакал чĕпписене шывран тухма чĕннĕ. Лешсем вара шывран тухма шутламан та. Вĕсем шывра хавасланса ишнĕ, чама-чама саванна.

***Анлантармалли тата асархаттармаллв самахсем:*** ĕрчетме, пусса каларна, катиклетнĕ, чама-чама саванна.

План

1.Хĕрарам мĕншĕн кавакал рамартисене чах айне хуна?
2.Шыв хĕрринче мĕн пулна?
3.Чах мĕншĕн кавакал чĕпписене шывран тухма чĕннĕ?

**3-мĕш приложени . Диктант.**

**Юман.**

Вăрманта юман чылай çўллĕ ўсет. Ирĕкре вара турачĕсене ытларах сарать. Çав юмансем çинче тĕрлĕ кайăк йăва çавăрать, хўтлех тупать. Вăйлă çил вăхăтĕнче ирĕкри юман хыттăн шавлать. Çуркунне юман ытти йывăçсенчен каярах папка кăларать. Кĕркунне вăл каярах çулçине тăкать.

**4-мĕш приложени Изложени.**

**Пиччĕшĕпе шăллĕ.**

Упа паланĕ çинче икĕ çамрăк çерçи ларнă. Çанталăк шăрăх. Çерçисен ăшĕ хыпнă. Палан айĕнчех пĕр катка шыв.

Пĕр çĕрçийĕ хăюллăн катка хĕррине пырса ларнă. Шыв ĕçнĕ. Унтан каялла палан çине вĕçсе хăпарнă.

Тепĕр çĕрçийĕ катка патне вĕçсе анма хăюлăх çитереймен. Вара пĕрремĕшĕ каллех вĕçсе аннă та ĕçем пек тунă. Альхинче шывне ĕçес тесе ĕçмен вăл. Сăмсине шыва чиксе кăларнă та шăллĕ çине пăхнă.Шывĕ каялла юхнă.

- Хăрушлăх çук. Килех, ĕç, - тесе каланă ĕнтĕ.

Акă иккĕмĕш çерçи те катка хĕррине вĕçсе аннă. Васкасах шыв ĕçме пикеннĕ. Кайран иккĕшĕ те вĕçсе кайнă.

**Ăнлантармалли тата асăрхаттармалли сăмахсем:** палан, ăшĕ, хыпнă, хăюлăх çитереймен, тепĕр çерçийĕ, ĕçем пек тунă, шăллĕ;
- Хăрушлăх çук. Килех, ĕç, - тесе каланă ĕнтĕ.

**Текста сӳтсе явмалли ыйтусем.**

1. Çерçи шăллĕне еплерех пулăшать?
2. Çанталăк мĕнле пулнă?
3. Хăюллă çерçийĕ мĕн тунă?
4. Хăюсăр çерçийĕ мĕнрен хăранă?

**План тата терев самахесем**

1. Ике çерси.
2. Хаюллă çерçи.
3. Шыв еçем пек туни.
4. Иккемеш çерси.

**5-мĕш приложени** **Диктант.**

**Кăмпа çумăрĕ.**

Чăн-чăн кăмпа çумăрĕ пĕр кĕвĕллĕн те лăпкăн çăвать. Курăксем йывăрланаççĕ. Çĕр кӳпчет. Йывăççем хушшипе пăс çĕкленет. Çумăр çăвать, çăвать. Кăмпа ӳсет, ӳсет.

Кăмпасем кăмпаçăсене кĕтеççĕ. Вĕсем кĕттермеççĕ, вăрманапĕрин хыççăн тепри килсе тулаççĕ. Мăнтăр кăмпана чĕререн савăнса пуç таяççĕ.

**6-мĕш приложени** **Изложени.**

**Хура аист.**

Хура аист варманта питĕ варттан пуранакан кайак. Вал чарлан евĕрлĕ. Ана тупере вĕçнĕ чух çеç курма пулать. Вĕçессе те вăл питĕ çӳлтен вĕçет.

Хура аист хуп-хурах мар. Хырамĕ аякĕсем, çуначĕ айĕсем унăн шурă тĕслĕ. Вăрăм сăмси хĕрлĕ. Вăрăм урисем те хĕп-хĕрлĕ. Аист аякран çеç хуран курăнать.

Хĕвел çинче вара аист тĕкĕ симĕссĕн каваккан, хĕрлĕн йалтăртатать. Читлĕхре кайак тĕсĕ тĕксĕмленет. Ирĕкре чухнехи йалтаркка тĕссем турех çухалаççĕ.(Н. Сладкое çырнинчен)

***Анлантармалли тата асархатгармалли самахсем:*** хуп-хурах мар, хырамĕ аякĕсем, хĕп-хĕрлĕ, хуран куранать; симĕссĕн, каваккан, хĕрлĕн йалтартатать, йалтаркка.

План варианчĕсем.

I

1. Хура аист арта пуранакан кайак?
2. Ана харан курма пулать?
3. Унан кĕлетки мĕн тĕслĕ?
4. Хура аист тĕкĕ харан йалтартатать?
5. Харан тĕксĕмленет?

II

1. Хура аиста мĕншĕн вĕрнĕ чухне кана курма пулать?
2. Аист хуп-хура тĕслĕ-и?
3. Мĕн пирки аистан йалтаркка тĕсĕ тĕксĕмленет?

III

1. Варттан пуранакан кайак.
2. Хуп-хурах мар аист.
3. Аист тĕкĕ.

**7-мĕш приложени** **Тĕрĕслев диктанчĕ.**

**Валерик.**

Апат хыççăн Валерик сарайне тухрĕ. Çӳлти сентре çинче кроликсем валли читлĕх туса хатĕрлерĕ. Çырмаран курăк татса килчĕ. Хурăн çулçисем татса таврăнчĕ. Кишĕр те

кăларса пачĕ. Пурне те çиеççĕ иккен вĕсем. Çивĕч шăллăскерсем кăшлаççĕ кăна. Вĕсем патне кунĕпех ачасем пыраççĕ. Вĕсем кроликсене килĕштереççĕ.

**8-мĕш приложени** **Изложени.**

**Тилĕ тус.**

(1-мĕш сăпатран, Çитăр мучи ячĕпе çырмалла)

Хĕлле тилĕ утара иленчĕ. Хурт-хăмара утар пуртĕнче хĕл каçараççĕ. Унта вара вĕсене шăшисем аптратсах çитереççĕ. Тилĕ пӳрт таврашĕнчи шăшисене тытрĕ те тытрĕ. Çитăр мучи тилле тĕкĕнмерĕ.

Пĕррехинче тилĕ кушакпа тĕл пулчĕ. Мăрмăр та тăрăшсах шăши тытатчĕ. Тилĕ тӳссе тăраймарĕ. Çăмне тăратрĕ те тăшманĕ çине сикрĕ.

Кушак пӳрте кĕрсе тарчĕ. Тилĕ - ун хыççăн. Кунта вара вăл *Çитăр мучи аллине* лекрĕ. *Утарта* тăрашуллă пулашакана *палларĕ.* Ăшшăн кулса *илчĕ.* Тилле ирĕке *ячĕ.*

Тилĕ тепĕр кунне те утара шăши тытма пычĕ.(Б.Александров çырнинчен.)

*Ăнлантармалли тата асăрхаттармалли сăмахсем:* утар, хурт-хамар. тытрĕ те тытрĕ, тилĕ - ун хыççăн, утарта.

Текста сӳтсе явмалли ыйтусем.

1. Тилĕ хĕлле мĕн сăлтавпа утара иленет?
2. Вăл кушака курсан мĕн тăвать?
3. Тилĕ Çитăр мучи аллине мĕнле лекет?
4. Çитăр мучи мĕншĕн тилле ирĕке ярать?

План.

1. Тилĕ утара иленни.
2. Кушакпа тĕл пулсан.
3. Пӳртре.
4. Тепĕр кунне.

Çăраççи: Çитăр мучи - *эпĕ,* тĕкĕнмерĕ - *тĕкĕнмерĕм, Ç*итăр мучи аллине - *манăн алла,* утарçă - *эпĕ,* палларĕ - *палларăм.* илчĕ - *илтĕм,* ячĕ - *ятăм.*

**9-мĕш приложени** **Ăнлантару диктанчĕ.**

**Ула такка.**

Улатакка ăслă кайăк иккен. Хăйне ырă тăвакансене вăл хăй те ырă çеç тăвать. Вăл хĕрсе кайса таклаттарнă чух хăрушлăх çывхарса çитнине сисмесĕр юлма та пултарать. Çавăнпа вăл пĕчĕк кайăксене йывăç айне апат пăраха- пăраха парать. Ана çиме кăсăясем тата ытти кайăксем пуçтарăнаççĕ. Хăрушлăх çывхарнине сиссессĕнех шав кăлараççĕ. Улатакка шава илтет те- инкекрен тарса хăтăлать. Кайăксем акă пĕрне – пĕри пулăшаççĕ. Епле туслă вĕсем! Улатакка апатне усăсăр çимеççĕ иккен ытти кайăксем.

Чăнах та, маттур вĕт улатаккапа унăн тусĕсем?

**10-мĕш приложени** **Изложени.**

**Ылтăн çаран.**

Эпир ялта пурăнатпăр. Пирĕн пӳрт умĕнчех çаран пуçланать. Унта нумай- нумай кукша пуç ӳсет. Çавăнпа та çаран сап- сарă. Ылтăн çаран тейĕн.

Пĕррехинче эпĕ ирех вăрантăм. Кантăкран пăхрăм та тĕлĕнсех кайрăм. Çаран сип- симĕс. Кăнтăрла пулăран таврăннă чухне çаран каллех сап- сарă. Эпĕ сăнама шутларăм. Каçхине çаран каллех симĕсленчĕ. Кайсах пăхрăм. Кукша пуç сарă çеçкисене пуçтăрна та симĕс курăнать. Хĕвел тухсан çеçкесем уçăлаççĕ. Çаран вара каллех сап- сарă.

( М.Пришвин çырнинчен)

**Анлантармалли тата асăрхаттармалли сăмахсем:** çаран, сап- сарă, сип- симĕс, нумай-нумай, сăнама, кукша пуç, çеçкисене.

**План:**

4. Çаран ăçтан пуçланать?
5. Унта мĕн ӳсет?
6. Ирхи çаран мен тĕслĕ?
7. Кăнтăрлахи çаран мĕн тĕслĕ?
8. Каçхи çаран мĕн тĕслĕ?

**11-мĕш приложени** **Изложени.**

**Чаплă утарçă.**

Çирĕм çул ĕнтĕ пирĕн асанне колхоз утарĕнче вĕлле хурчĕсене пăхса пурăнать. Таврари чаплă утарçă вăл.

Çуллахи пĕр ăшă кун эпир, Петĕр шăллăмпа иксĕмĕр, ун патне кайма шутларăмăр. Ирхине ирех вăрмана тухса утрăмăр. Нумай та каймарăмăр, пирĕн куç умне Сăр вăрманĕ тухса тăчĕ. Акă утар. Вăрманта шавлă, тĕрлĕ кайăк сасси илтĕнет!

Асанне хирĕç тухса кĕтсе илчĕ. Вăл пире пĕр пĕчĕк пӳрте илсе кĕчĕ. Кунта сăмсана пыл шăрши çапать. Асанне сĕтел çине чей чашăкĕпе пыл лартрĕ.

- Çисе пăхăр, ку сирĕн валли,- терĕ вăл.

Эпир асаннене пыл çитернĕшĕн тав турăмăр. Унтан ăна хуртсем пăхма пулăшрăмăр.

( В. Давыдов- Анатри çырнинчен)

**Анлантармалли тата асăрхаттармалли сăмахсем:** вĕлле хурчĕсене, çуллахи, шăллăмпа, хирĕç тухса кĕтсе илчĕ, хуртсем пăхма пулăшрăмăр.

**План:**

1.Мĕншĕн асанне чаплă утарçă?
2. Пĕррехинче ачасем ăçта кайса?
3.Кам вĕсене кĕтсе илчĕ?
4.Мĕнле пурте асанне ачасене илсе кĕчĕ?
5.Ачасем асаннене мĕн туса пулăшрĕç?

**12-мĕш приложени** **Диктант .**

**Кăмпара.**

Акă шурă хурăнсем курăнса каяççĕ. Çӳлте çил кăштах вĕрсе илет. Кăтра çулçăсем пăшăлтатаççĕ. Эпир ытларах аялалла пăхатпăр. Пирĕн кăмпа татас килет. Кăмпана ăçта ытларах шырамалла. Ăвăс кăмпи ăвăслăхра ӳсет. Хурăн кăмпи – хурăнлăхра. Кăрăç çăкалăхпа юманлăха юрататать, шурă кăмпасем хыр айĕнче, чăрăшлă вырăнта, хурăнлăхра пулаççĕ.

Эпир кăмпасене çĕçĕпе тирпейлĕн касатпăр. Кăмпаçăсем кăмпа тĕввине кăкламаççĕ.

**13-мĕш приложени** **Изложени.**

**Алăсем.**

Сын аллисем тем те тума пултарассе. Суртсем купалассе, сер чакалассе. Юхан шывсене певелесе лартассе… Аласем кересе, ручка, пачка, малатук тытассе.

Этем аллисем сесен хирсенче садсем ерчетессе, уйах сине ракета вестерсе ярассе. Ас-хакалпа аласем пер пулсан тем те тума пулать.

Анчах та аласем усал ессем те тума пултарассе. Весене ачаранпах ыра ессене ханахтармалла. Мен печекрен аласем камалла черепе тата усамла ас-хакалпа килешсе тама веренччер.

**Анлантармалли тата асархаттармалли самахсем:** суртсем купалассе, сер чакалассе, юхан-шывсене певелесе лартассе, аласем кересе, ручка, пачка, малатук тытассе, сесен хирсенче, ас-хакалпа, веренччер.

**План.**

1.Сын аллисем.

2.Ас-хакалпа аласем.

3.Аласем тата ыра ессем.

**14-мĕш приложени** **Тĕрĕслев диктанчĕ.**

**Юр пĕрчисем.**

Вырсарникун пулчĕ ку. Ялти мĕнпур ачасем Асамат ҫырмине пуҫтарĕнчĕҫ. Хăшĕ йĕлтĕрпе ярăнать, хăшĕ- ҫунашкапа… Ачасем шавларĕҫ, кулчĕҫ, кăшкăрчĕҫ.

Кĕтмен ҫĕртен ҫанталăк улшăнчĕ. Юр пĕрчисем ял ҫине вĕҫсе килчĕҫ. Юр ҫума тытăнсан ачасем савăннипе тата хыта кăшкăрашрĕҫ.

Ҫур сехет хушшинче юр самай ҫурĕ. Тăвайкки шурă пуставпа витĕнчĕ.

**15-мĕш приложени** **Пăхса ҫырни.**

**Пĕчĕк тухтăр.**

Ачасем хăйăр купи ҫинче вылянă. Сасартăк пĕчĕк Сентти кăшкăрса макăрма пуҫланă. Вăл ăнсăртран кĕленче савăта ҫĕмĕрнĕ иккен. Кĕленче ванчăкĕ вара унăн урине кастарнă. Тоня шкулта санитарка тивĕҫĕсене пурнăҫлать. Унăн хăйĕнпе яланах пĕр татăк бинт тата йод кĕленчи пур. Акă вăл Сентти урине хăйăртан шăлса тасатрĕ. Унтан сурана йодпа сĕрчĕ те бинтпа типтерлĕн ҫыхса ячĕ.

Тоня ӳссен тухтăр пулма ĕмĕтленет. (И. Шухши ҫырнинчен)

**16-мĕш приложени** **Изложени.**

**Чĕрĕпсем.**

Чĕрĕп- хурт- кăпшанкă ҫиекен чĕр чунсенчен чи пысăкки. Унăн тăршшĕ 27-30 сантиметра ҫитет. Ку чĕр чунăн пуҫĕ савăл евĕрле, тути шĕвĕр те пĕчĕк. Урисем кĕске пулсан та вăл хăвăрт чупать. Унăн хӳри кĕске. Хăмăр е хура хытă йĕпписен вĕҫĕсем питĕ шĕвĕр те шурă тĕслĕ. Ҫак йĕпсем чĕрĕпе ҫăткăн чĕр чунсенчен хăтараҫҫĕ.

Унăн куҫĕ начар курать. Анчах хăлхи вара питĕ лайăх илтет.

Чĕрĕп апата ытлашши тиркесех тăмасть. Тĕл пулакан мĕнпур кăпшанкăна ҫиет. Вăл шăшисене те, шапасене те, калтасене те тытать. Чĕрĕп наркăмăшлă ҫĕленсенчен те хăрамасть. Хырăмĕ пит выҫсан вĕҫен кайăксен йăвисене те тустарать.

( Н. Игнатьев ҫырнинчен)

**Ăнлантармалли тата асăрхаттармалли сăмахсем:** хурт- кăпшанкă, чĕр чунсенчен, унăн тăршшĕ 27-30 сантиметр, пуҫĕ савăл евĕрле, хытă йĕпписен вĕҫĕсем, ҫăткăн чĕр чунсенчен хăтараҫҫĕ, ытлашши, мĕнпур кăпшанкăна, наркăмăшлă ҫĕленсенчен, вĕҫен кайăксен йăвисене те тустарать.

**План:**

1.Чĕрĕпе сăнласа пани.

а) унăн тăршшĕ;

ă) пуҫĕ тата тути еплерех;

б) ури тата хӳри кĕске пулни;

в) хытă йĕпписен уссийĕ.

2. Мĕнлерех чĕр чун чĕрĕп?

3. Мĕн ҫиет чĕрĕп?

**17-мĕш приложени** **Изложени.**

**Ҫĕмĕрт.**

Ҫуркунне. Ытти йывăҫсем хĕл ыйхинчен вăранаҫҫĕ кăна. Ҫĕмĕрт вара симĕсленме пуҫланă та. Ку йывăҫ чечеке чи малтан ларать.

Ҫĕмĕрт юхан шыв хĕрринчи вăрмансенче ӳсет. Ана ҫырма- ҫатра хĕрринче те асăрхатăн. Ҫак йывăҫ ҫырли питĕ усăллă. Ҫырлана вар виттипе аптракан ҫынна ҫитереҫҫĕ. Унран вĕретнĕ шыва та ĕҫтереҫҫĕ.

Çĕмĕрт – чăвашăн юратнă йывăçĕ. Ана мухтаса сăвăсем, юрăсем хываççĕ. Анчах та кашни çуркунне çĕмĕрт пысак хур курать. Ырă шăршăллă, илемлĕ тесе унăн турачĕсене хуçаççĕ. (У.Асан, И. Шухши çырнинчен)

**Анлантармалли тата асăрхаттармалли сăмахсем:** юхан шыв, çырма- çатра, вар витти, хур курать, ырă шăршăллă, илемлĕ тесе унан турачĕсене хуçаççĕ.

**План:**
1.Çуркунне çитсен.
2.Çĕмĕрт пур çĕрте те ӳсет.
3.Çĕмĕрт усси.
4.Йывăç хур курни.

**18-мĕш приложени** **Тĕрĕслев диктанчĕ.**

**Арбуз.**

Çуркунне пахчана тухрăм. Ешĕл курăк хушшинче пĕр çамрăк хунав куртăм. Эпĕ ăна чавса кăлартăм. Хĕвел питне лартрăм. Каççĕрен шăвартăм.

Çак хунав парка уссе çитĕнчĕ. Çулçи айĕнче кавăн пек çимĕçсем выртаççĕ. Эпĕ ăна аттене кăтартрăм. Атте тĕлĕнсех кайрĕ.

Эпир иртнĕ çул çак выранта арбуз çинĕччĕ.

**19-мĕш приложени** **Изложени.**

**Хитре нăрă.**

Ачасем нăрă тытрĕç. Пĕчĕкçĕ, питĕ хитрескер. Пуçĕ хура. Хĕрлĕ çунаттисем çинчи пăнчăсем те хура. Хускалмасть. Чееленет ĕнтĕ. Вилнĕ тесе шутлаччăр тет.

Ултă урине хуçлатнă. Мăйăхĕсене пытарнă. Хайне ирĕке ярасса кĕтет. Ку уяр нăрри. Ачасем ăна курăк турачĕ çине лартрĕç. Нăрă çуначĕсене сарса ячĕ те вĕçсе кайрĕ.

Уяр нăрри курăк пыйтине нумай пĕтерет. Вĕсем кашни çулçă çинчех пулаççĕ. Авă мĕн чухлĕ йăшăлтатаççĕ вĕсем улмуççи çулçи çинче! Уяр нăрри вĕсене самантрах çисе ярать. (Г. Скребицкий çырнинчен.)

**Ăнлантармалли тата асăрхаттармалли сăмахсем:** пĕчĕкçĕ, çунаттисем, чееленет, шутлаччăр, уяр нăрри (вир кайăк), курăк пыйти, улмуççи.

**План.**
1. Хитре нăрă чее.
2. Нăрă вĕçсе кайни.
3. Курăк пыйтине пĕтерни.